**МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**

**Министерство образования Чувашской Республики**

**Администрация Красночетайского муниципального округа**

**МБОУ "Мижеркасинская ООШ"**

| РАССМОТРЕНО | СОГЛАСОВАНО | УТВЕРЖДЕНО |
|---|---|---|
| Педсоветом | ШМО учителей | И.о. директора |
| ________ | ________ | ________ В.В.Данилов |
| Протокол № 1<br>от «29» августа 2023 г. | Протокол № 1<br>от «29» августа 2023 г. | Приказ № 83/2-В<br>от «30» августа 2023 г. |

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

**учебного предмета «Чувашская литература»**

для обучающихся 3 класса

**с. Мижеркасы 2023**

**тухнӑ чухне кӗтекен результатсем**

**Хамкамлӑх (личностные):**

- ачасем хӑйсем вӗренекен пулнине ӑнланни, вӗренекенӗн яваплӑхне уҫӑмлани;
- ачасем тӑван ҫӗршыв, тӑван халӑх, тӑван чӗлхе, литература ӑнлавсене ӑша хывни, хӑйсем хӑш халӑх ывӑл-хӗрӗ пулнине ӑнланни, вӗсен тӑван халӑха хисеплес туйӑм амаланма пуҫлани;
- ачасем таврари пурнӑҫ, этем, ҫут ҫанталӑк ҫинчен мӗн пӗлнине анлӑлатни, тавракурӑмӗ йӗркеленсе пыни;
- харпӑр хӑй хӑтланӑвӗсене сӑнама-асӑрхама, вӗсемшӗн  яваплӑ пулма хӑнӑхса пыни;
- шкулта, класра, урамра, килте, хӑнара хӑвна мӗнле тытмаллине, уроксене мӗнле хатӗрленмеллине, ӗҫ вырӑнне хатӗрлемеллине, парта хушшинче мӗнле лармаллине, ӗҫ  хатӗрӗсемпе мӗнле ус= курмаллине, ӗҫе тӑрӑшса, тимлӗ, тирпейлӗ тумаллине ӑнланни;
- тимлӗх калӑпӑшӗ, пахалӑхӗ, самантлӑх, ятарлӑ тата ирӗклӗ астӑвӑмӗ аталанни;
- хайлавсенчи сӑнарсен лайӑх тата начар енӗсене шута илни;
- пӗчӗккӗн аслисемпе пӗрле ӗҫе хӑнӑхса пымаллине, пурнӑҫра ҫак хӑнӑхусем кирлӗ пулассине  ӑнланни;
- ӗмӗтленни, вӗренни пурнӑҫра кирлӗ пулние тавҫӑрни.
- шкулта вӗренни пӗлӳ пухмалли, аталанмалли, харпӑр хӑй пурнӑҫне кӑсӑклӑрах, усӑллӑрах тума вӗренмелли тӗп мел пулнине ӑша хуни;
-  ачан кӑмӑл-сипечӗ ҫырӗпленсе пыни: ваттисене хисеплемеллине, ҫынпа ырӑ пулмаллине, ҫынсем хушшинче хӑвна мӗнле тытмаллине, чӗр чунсене юратмаллине ӑнланса илни;
- шухӑшлав  ӑслайӗсем туптанни.

**Предметсен пӗрлӗхлӗ результачӗсем (метапредметные)**

***Пӗлӳлӗх(познавательные):***

- итленӗ е вуланӑ чух мӗнле лармаллине тата урокра кирлӗ хатӗрсемпе мӗнле усӑ курмаллине пӗлни;
- таврари япаласене, пулӑмсене тӗпчес ӑнтӑлав аталанни;
- таврари япаласемпе пулӑмсем ҫинчен мӗн пӗлнине системӑлани: «Тӑван ҫӗр-шыв» ӑнлава уҫӑмлани. Вӑл ҫуралнӑ вырӑн, тӑван ял, тавралӑх, хӑй пурӑнакан республика тата ҫӗр-шыв (Раҫҫей) пулнине ӑнланни, унӑн культури, мухтавлӑ ҫыннисем ҫинчен пӗлни; ҫут ҫанталӑк законӗсем, япаласемпе пулӑмсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса аталаннине курни;
- тавралӑх енӗсене, япалан вырӑнне кӑтартма, тавралӑхри вырӑнне палӑртма пӗлни;
- япаласен пӗрпеклӗхне, уйрӑмлӑхне, вӗсем мӗнпе уйрӑлса тӑнине курма, палӑртма пултарайни;
- ачан тавракурӑмӗ анлӑланни: ҫут ҫанталӑкри пулӑмсем, ҫулталӑк вӑхӑчӗсем, ҫемье, чӗр чунсем, ачасен пурнӑҫӗ, ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен тӗплӗнрех пӗлни, тӗнче курӑмӗ йӗркеленсе пыни;
- туйӑм культури ҫивӗчленни: кирлӗ вӑхӑтра пулӑшма, мӗн тумалла, мӗнле тумаллине тавҫӑра пуҫлани;
-пысӑк, пӗчӗк, тан услӑха курни, логикӑллӑ шайлаштарайни;
- вӗренӳ хатӗрӗсенче кирлӗ материала шыраса тупма пӗлни;
- вӗренӳ хатӗрӗсенче панӑ символсене, модельсене, схемӑсене,паллӑсене ӑнланни;

***Йӗркелӳ-хаклав(регулятивные):***

- тантӑшӗсен тата харпӑр хӑй ӗҫне тищкерейни тата пахалайни;
- тишкерӳ – пӗтӗҫтерӳ ӗҫне хӑнӑхни, пӗтӗмӗшлине пайсем ҫине уйӑрма, пайӗсене пӗтӗҫтерме пӗлни;

- тĕрĕс курма, япаласен уçлăхри вырăнне палăртма пултарни;
- хăйĕн ĕçне вĕрентекен, юлташĕсем хакланине йышнни;
- вĕрентекен, класпа пĕрле палăртнă задачăна татса памалли тĕрлĕ майсем тупни;
- хăвăн шухăшна ăнлантарса парайни;
- йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
- ĕç йĕркине, мĕн хыççăн мĕн тумаллине, мĕншĕн ун пек тумаллине тавçăрни;
- ĕçĕн кашни тапхăрне вĕрентекен пулăшнипе хак парса пырайни;
- харпăр хăй ĕçне планлама пĕлни.

***Хутшăну(коммуникативные):***

- шухăша тĕрĕс те уçăмлă, çыхăнуллă каласа пама тăрăшни;
- текстпа ĕçлеме пĕлни, вулани çинчен çыхăнуллă тата уçăмлă каласа пама тăрăшни;
- ачан пуплевĕ, йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
-пуплев культури аталанни: пĕр-пĕр япала, пулăм, ĕç çинчен çыхăнуллă, кирлĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама пултарни; юлташпа, аслисемпе, ваттисемпе мĕн çинчен тата мĕнле сăмахсемпе усă курса калаçмаллине ăнкарни, кампа калаçнă чух, хăçан, мĕнле сăмахсемпе (сывлăх сунни, тав туни, сывпулашни) усă курмаллине тавçăрни;
- çывăх, хирĕçле, пĕр пĕлтерĕшлĕ, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тĕрĕсрех, тарăнрах ăнланни, вĕсен ретĕнче кирлине суйлайни;
- сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшне ăнланни;
- чăваш чĕлхинче сăмахсен предложенире çирĕп йĕрке пуррине ăнланни, ăна пуплеврe тытса пырайни;
- каласа парассин тĕрлĕ тĕсĕсене (калав, сăнлав, уйлав) пĕлни. Вĕсен тытăмĕпе уйрăмлăхĕсене курма, калавăн тĕрлĕ тĕсне йĕркелеме пултарайни;
- калав темине, тĕп шухăшне палăртайни;
- хутшăну пуплевĕ (диалог) тытăмне, унти предложенисен хăй  евĕрлĕхне (ытларах тулли мар предложенисем) пĕлни. Диалог шалашĕ пĕр темăна, пĕр тĕп шухăша пăхăнса  тăнине ăнланни. Майĕпен хутшăну пуплевне тĕрлĕ пуплев  ситуацийĕсенче усă курма пултарни;
- ушкăнпа ĕçлеме пĕлни;
- сăмах йышĕ пуянланни;
- çынсем тĕрлĕрен шухăшлама пултарнине ăнланни.

***Предметăн пайрам (предметные) результачĕсем:***

- илемлĕ хайлавсене йышăнма, итлеме-ăнланма малалла хăнăхса пыни;
- «халăх сăмахлăхĕ», «ача-пăча сăмахлăхĕ» ăнлавсене уçăмлама пĕлни;
- чĕнӳ-йыхрав  юррисемпе паллашса вĕсене мĕнле тĕллевпе каланине палăртма пултарни, мĕнле йĕркеленине сăнама пĕлни;
- шутлав сăввисем тахçан авал пулса кайнине ăнланни;
- тупмалли юмахсен хăйевĕрлĕхне, тытăмне сăнама пĕлни;
- илемлĕ хайлав мелĕсене (танлаштару, сăпатлантару) уйăрса илме пĕлни, вĕсене  тупмалли юмахсенче тупайни; тупмалли юмахсем хайланă чухне çак мелсемпе усă курма пĕлни;
- «юмах» жанрăн хăйевĕрлĕхне   ăнланса илни; юмах логикипе сюжетне сăнама пултарни; юмах тытăмĕн хăш-пĕр  вăрттăнлăхĕсене уçăмлама ăнтăлни;
- «илемлĕ литература», «хайлав», «автор» ăнлавсене  уçса пама пултарни;
- «калав», «сăвă» ăнлавсене уçăмлайни;
- сăвăласа çырнă хайлавсен тулашĕ, вĕсен хăйевĕрлĕхне сăнаса курма, «рифма», «ритм» ăнлавсене уçăмлама пĕлни;
- сăвăри йĕрке вĕçĕсем сасă тĕлĕшĕнчен пĕр пек янăрани çеç çителĕксĕр, шухăш уçăмлăхĕ те пулмаллине ăнланни;

- калава ансаттăн тишкерме вĕренни;
- сăвăласа çырнă хайлавсене туйма-ăнланма (восприятие) вĕренни;
- автор сăвăсенче тĕрлĕ кăмăл-туйăма палăртнине ăнланни;
- калав мĕн çинчен пулнине ăнланни, калав темине уçăмлама вĕренни;
- калав теми унта мĕн çинчен каланипе çыхăнса тăнине ăнланни;
- илемлĕ хайлавсенчи шӳте ăнланма пĕлни.

**Вĕренӳ предмечĕн шалашĕ**

**Вулав карти**

**Чăваш çĕр-шывĕ.** Чăваш ен илемĕ, юхан шывĕсемпе вăрманĕсем. Чăваш çыннисемпе ытти халăхсем хушшинчи туслăх, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнни.

**Кĕркунне.** Кĕрхи çут çанталăк, çынсен ĕçĕ-хĕлĕ. «Кĕрхи çут çанталăк» экскурси.

**Тăван тавралăха, çут çанталăка упрани, илем кӳни - Тăван çĕр-шыва сыхланиех.** Çынсем тăван тавралăха упрама, илем кӳме тăрăшнине, çак ĕçе ачасем те хутшăнма пултарнине сăнлакан калавсемпе сăвăсем.

**Эпир — сăпайлă ачасем.** Ачасен пурнăçĕ, вĕсен туслăхĕ. Ачасем хăйсене сапăр та тирпейлĕ тытма тăрăшнине, аслисене хисепленине, сăпайлă пулнине сăнлакан калавсем, сăвăсем, статьясем.

**Асамçă хĕл.** Хĕллехи çут çанталăк. Этем ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕр чунсен пурнăçĕ. Хĕл илемĕ калавсенче, юмахсенче, ӳнерçĕсен ӳкерчĕкĕсенче сăнланни. «Хĕллехи çут çанталăк» экскурси.

**Халăх пултарулăхĕ.** Юмахсем, юрăсем, ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем (тупмалли юмахсем). Тĕрлĕ халăх юмахĕсем.

**Эпир Улăп йăхĕнчен.** Улăп халапĕсем тата ытти халăх халапĕсем.

**Çурхи хаваслăх.** Çут çанталăк чĕрĕлни. Чĕр чунсен пурнăçĕпе çынсен ĕçĕсем. Ачасен çурхи вăййисем. «Çурхи çут çанталăк» экскурси.

**Чăваш халăхĕн паллă çыравçисем.** К.Иванов, Н.Шелепи, Н.Илпек, М.Трубина, В.Харитонов, Х.Уяр, Н.Карай сăввисемпе калавĕсем.

**Тăванла халăхсен çыравçисем.** М.Джалиль, Г.Тукай, сăввисемпе поэма сыпăкĕсем.

**Вырăссен чаплă çыравçисем.** А.Пушкин, И.Крылов, Л.Толстой, Н.Некрасов хайлавĕсем. Вырăссен хальхи ача-пăча литературин тĕслĕхĕсем: Н.Сладков, Н.Соколов-Микитов, Л.Ковалев хайлавĕсем.

Вĕрентӳçе е вĕренекен суйласа илнĕ 5-6 сăвва пăхмасăр вĕренмелле.

**Вулав хăнăхăвĕсем.** Тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр, вăтам хăвăртлăхпа вуласси. Вулав хăвăртлăхĕ минутра 70 сăмахран кая мар пулмалла (ăшра вуланă чухне сăмах шучĕ 80 таран ӳсмелле). Шухăш аталанăвне кăтартакан сăмахсене ансат мелсемпе усă курса палăртасси. Шухăшне тата тĕллевне кура текста тивĕçлĕ интонаципе (хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр, логика пусăмĕсемпе логика тăхтавĕсем туса) вуласси. Сасăпа вуланă чухне харкам вулава асăрхаса пырасси, йăнăш вырăнсене тепĕр хут тĕрĕс вуласа тӳрлетесси. Текстра пĕлтерĕшне уçăмлатмалли сăмахсене харкам тĕллĕнех палăртасси.

**Текстпа ĕçлесси. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси.** Вуланă текстри ĕçсем мĕнле аталанса пынине йĕркипе аса илсе каласси (ансат план тăрăх). Панă ыйтăва хуравлама текстри кирлĕ вырăна тупасси. Текстăн шухăш тĕлĕшĕнчен вĕçленнĕ пайĕсене уйăрасси, вĕрентӳçĕ пулăшнипе текст ятне ăнлантарасси, унăн тĕп шухăшне палăртасси.

Ансат план ăсласси, план тăрăх текст ăшлăхне асăмласа каласа парасси (туллин, кĕскен, суйлавлăн). Вуланине туллин тата суйлавлă каласа панă чух сăмахлă ӳкерчĕксем тăвасси, сăнарлă сăмахсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе, синонимсемпе вырăнлă усă курасси.

Сăнарсене, çут çанталăка сăнласа кăтартнă чух усă куракан сăмахсене, вĕсен майлашăвĕсене текстра тупасси. Сăмахăн текстри пĕлтерĕшне ăнланасси. Сăнарсене вĕрентӳçĕ пулăшнипе хак парасси. Курни-илтни, сăнани çинчен çыхăнуллă калав тăвасси. Каланă шухăша вуласа тухнă текстри тĕслĕхпе çирĕплетесси. Инсценировкăсене хутшăнса роль сăмахĕсене тивĕçлĕ интонаципе вуласси.

**Илемлӗ литература жанрӗсен хӑш-пӗр уйрӑмлӑхӗсем:** юмах (унта тӗлӗнмелле, чӑн пурнӑҫра пулма пултарайман ӗҫсем пулса иртеҫҫӗ), юптару (сӑнарӗсем-тӗрлӗ чӗр чун, йывӑҫ-курӑк; вӗҫӗнче вӗрентсе калани пур), сӑвӑ (йӗркисем хӑйне евӗр виҫеллӗ, йӗрке вӗҫӗсем пер пекрех янӑраҫҫӗ).

**Вӗренӳ кӗнекине чухласси:** кирлӗ хайлава унӑн тупмаллинчи ячӗ тӑрӑх тупасси; кӗнекене пӗр авторӑн калавӗ е сӑвви тӗлне уҫасси; тема тӗлӗшӗнчен пӗр-пӗрне ҫывӑх хайлавсене асӑрхасси; текст хыҫҫӑнхи ӗҫсене харпӑр хӑй тӗллӗн ӑнланса пурнӑҫласси.

## Класс тулашӗнчи вулав

**Вулав материалӗ:** чӑваш, вырӑс, ытти тӑванла халӑхсен писателӗсем ачасем валли ҫырнӑ 15-20 кӗнеки, «Тантӑш» хаҫатпа «Тетте» журналти материалсем (вӗрентӳҫӗ суйласа илнӗ тӑрӑх).

**Вулав тематики:** тӑван тавралӑх илемне сӑнлакан, пурнӑҫа юратма, ҫут ҫанталӑка упрама, сапӑр та тараватлӑ пулма вӗрентекен, тӗрлӗ халӑх ывӑлӗ-хӗрӗсен пархатарлӑ ӗҫ-хӗлне сӑнлакан сӑвӑсемпе калавсем, пысӑкрах калӑплӑ хайлав сыпӑкӗсем, юмахсем.

**Ача-пӑча кӗнекипе ӗҫлесси** (пӗлӳсем, ӑслайсемпе хӑнӑхусем). Кӗнеке пайӗсене пӗлесси: титул листи, ум сӑмах, тупмалли, вӗҫӗнче калани. Кӗнеке мӗн ҫинченнине унӑн пайӗсем тӑрӑх ӑнкарасси. Класс тулашӗнчи вулав урокӗ валли кирлӗ кӗнекене шыраса тупасси. Класс тулашӗнче 1-мӗш ҫур ҫулта эрнере вӑтамран 10-12, 2-мӗш ҫур ҫул вӗҫӗнче 20-25 страницӑран кая мар вуласси, вуласа пӗлнине вӗрентӳҫӗ ыйтӑвӗсем тӑрӑх каласа парасси. Кӗнекен ятне, авторне аса илме пӗлесси. Паллашнӑ писателӗн 2- 3 кӗнекине астӑвасси. Сӗннӗ кӗнекесен спископӗпе, тема картотекипе усӑ курасси.

**Ҫӗнӗ литература ваййисем выляма вӗрентесси.** Вӗсене класс тулашӗнче те выляттарасси.

## Тематика планĕ

| № | Урок теми | |
|---|---|---|
| 1 | **Ак ситре сентябрьЛитература** вулавĕ предметăн 3 –мĕш класс валли палăртнă тĕллевĕсемпе задачисем. | 1 |
| 2 | Х. Уярăн «Мăйăр хуппи» калавĕ. | 1 |
| 3 | К Беляеван «Чи хаклă парне» калавĕ | 1 |
| 4 | **Чаваш сершыве** К. Ушинскин «Тăван çĕр-шыв - пирĕн анне» хайлавĕ | 1 |
| 5 | КТВ. « Шкула, ачасемер, шкула». | 1 |
| 6 | Н. Янкасăн «Лăпкă çĕр-шывра» сăвви. | 1 |
| 7 | С.Вишневскийăн «Туслăх сăмахĕ» сăвви | 1 |
| 8 | КТВ. Шкула, ачасемĕр, шкула. | 1 |
| 9 | **Керкунне** Кĕр пуçламăшĕ. Н. Исмуковăн «Кĕр пасарĕ» сăвви. | 1 |
| 10 | И.Соколов-Микитовăн«Кĕрхи вăрманта» калавĕ. М. Волковăн «Кĕрхи хурăн» сăвви. | 1 |
| 11 | О. Туркайăн «Çулçă» калавĕ. | 1 |
| 12 | Н. Янкасăн «Сивĕтет çанталăк» сăвви. | 1 |
| 13 | **Халах самахлахе** Тупмалли юмахсем. | 1 |
| 14 | Вăйă-шăпа юррисем. | 1 |
| 15 | КТВ «Ĕç – пурнăç илемĕ» | 1 |
| 16 | Çыравçăсем хайланă пулмасла халапсем. | 1 |
| 17 | Прозăлла юптарусем. Юптарусен тытăмĕ. | 2 |
| 18 | **Улап йахенчен** Мифсем. Улăп халапĕсем. | 1 |
| 19 | КТВАсамат кĕперĕ (чăваш халăх халапĕ) | 1 |
| 20 | Тĕрлĕ халăх халапĕсем, вĕсен пĕрпеклĕхĕпе уйрăмлăхĕсем | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 21 | **Юмах юпа тарринче** Чăваш халăх юмахĕ. Чĕр чун юмахĕсем. | 1 |
| 22 | КТВ Ачалăх – савăк вăхăт | 1 |
| 23 | Тĕрлĕ халăх юмахĕсем. Йăла юмахĕсем. | 1 |
| 24 | Асамлă юмахсем. | 1 |
| 25 | Автор юмахĕсем. | 2 |
| 26 | В Эктелĕн «Хĕл пуçламăшĕ» сăвви. | 1 |
| 27 | «Хырпа Чăрăш тата Уртăш мĕншĕн яланах симĕс?» юмах. | 2 |
| 28 | КТВ Асанне арчинчи мерчен. | 1 |
| 29 | **Асамса хел** В Харитоновăн «Йĕлтĕрпе» тата А Смолинăн «Халăх хайлавĕ майлă» сăввисем. | 1 |
| 30 | **Эпир –сапайла ачасем** Н. Карайăн «Йăмăк» калавĕ. | 1 |
| 31 | М Джалилăн «Çывракан ача» тата Р.Минатулинăн «Пулăшакан» сăввисем. | 1 |
| 32 | А Кăлканăн «Наян Кампур» тата А Галкинăн «Шăна кăмпин шăпи» юптарăвĕсем. | 1 |
| 33 | Н Иванов. «Чечек çыххи». | 1 |
| 34 | КТВ. Кулленхи пурнăçпа йăла-йĕрке | 1 |
| 35 | И Шухши. «Кĕрен тӳпе». | 1 |
| 36 | Г. Волков. «Пуянлăх хакне ĕçлекен çеç пĕлет». | 1 |
| 37 | Л. Ковалюк. «Хăравçă». | 1 |
| 38 | Л. Ковалюк. «Хăравçă». | 1 |
| 39 | КТВ. Вăрман калавĕсем. | 1 |
| 40 | А. Ерусланов. «Хапхаçă». | 1 |
| 41 | О. Уайльд. «Хаяр Улăп». | 1 |
| 42 | О. Уайльд. «Хаяр Улăп». | 1 |
| 43 | Исмай Исемпек. «Шăвăç витре». | 1 |
| 44 | У. Ушинскин «Вăрманти ачасем» калавĕ. | 1 |
| 45 | КТВ. Çут çанталăк тата эпĕ. | 1 |
| 46 | **Сур хаваслахе** Н. Исмукован «Çурхи тĕнче», Л. Смолинан «Çуркунне пуçланать» сăввисем | 1 |
| 47 | Н. Некрасов. «Ешĕл шав». Уйăп Мишши «Çурхи вăйă» | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 48 | Мĕтри Кипекĕн «Çурхи вăрманта» калавĕ | 1 |
| 49 | Соколов-Микитовăн «Вăрманта» калавĕ. | 1 |
| 50 | КТВ. Çут çанталăк тата эпĕ. | **1** |
| 51 | Г. Снегирев. «Малтанхи хĕвел». | 1 |
| 52 | К. Ивановăн «Çуркунне çитсен» сăвви. | 1 |
| 53 | Н. Матвеевăн «Таврана илем кӳреççĕ», А. Артемьевăн «Çурхи кун» калавĕсем. | 1 |
| 54 | **Черчун тенчи** Н. Ишентейĕн «Аптраман кăвакалсем» калавĕ. | 1 |
| 55 | С. Элкерĕн «Кашкăрсемпе çапăçни» калавĕ. | 1 |
| 56 | Н. Иванов. «Асанпа Хураçка». | 1 |
| 57 | КТВ.<br>Йĕри-тавра пирĕн туссем. | 1 |
| 58 | Л. Ковалюк «Мулкач та тутă пултăр». | 1 |
| 59 | Л. Ковалюк. «Мулкач та тутă пултăр». | 1 |
| | | 1 |
| 60 | Н. Матвеевăн «Çара çерçи» » калавĕ. | 1 |
| 61 | Н. Матвеев. «Каюра». | 1 |
| 62 | Г. Орловăн «Кашкăр тавăрăвĕ» калавĕ. | 1 |
| 63 | **Ытарайми таван тавралах** И. Дубановăн «Эл кӳлли» калавĕ . | 1 |
| 64 | Г. Орлов. «Çухату». | 1 |
| 65 | Х. Уярăн «Тарăхнă така» калавĕ. | 1 |
| 66 | Х. Юлташевăн «Лĕпĕш», У. Мишшин «Çуллахи каникул» сăввисем. | 1 |
| 67 | КТВ | 1 |
| 68 | Петемлету уроке | 1 |